**Çамрăк журналист**

# Çыру

**Публицистикăра çыру стилĕпе йĕркеленнĕ асăннă жанрпа тахçантанпах усă кураççĕ. Çак вăл – автор пĕр-пĕр темăпа ятарласа тухса калаçни, адресата чĕнсе калани, хăйĕн шухăш-кăмăлне пĕлтерни. Çыру мелĕн ятарлă жанрĕ çурални харпăр хăй тата ĕç ыйтăвĕсемпе çыру çӳретессин формисем социаллă политика литературин мелĕсемпе анлăн пуянланнипе çыхăннă. Кунпа пĕрлех ĕç тата харпăр хăй çыру хутшăнăвĕсене обществăшăн пĕлтерĕшлĕ пулса тăракан шухăшсене кĕртни çыру мелне журналистикăн хăйне тĕллĕн жанрĕ пулса тăма май панă.**

Çыру характерĕ çине прокламацисем, листовкăсем, чĕнсе каланисем те витĕм кӳнех. Вĕсем ытларах çынсем хушшинче восстанисен, пăлхавсен, революцисен вăхăтĕнче анлă сарăлнă пулнă. Кун пек чĕнӳ хучĕсене хаçатсенче те пичетленĕ. Çакă журналистикăра та палăрса юлнă.

Обществăшăн пĕлтерĕшлĕ пулса тăракан шухăшсене уçса парасси, çынсене кая хăвармасăр туса ирттермелли ĕçсене йыхравласси çырăвăн жанр уйрăмлăхĕсем пулса тăраççĕ. Публицистикăн çыру стилĕ яланах автор вулакансене е итлекенсене чĕнсе каланипе çыхăннă.

Массăллă коммуникаци хатĕрĕсенче çырупа усă курни конкретлă ыйту, лару-тăру, проблема çине тимлĕх уйăрттарать, ăна кая хăвармасăр татса пама хистет. Унсăрăн уйрăм çынсемшĕн, çынсен ушкăнĕшĕн е пĕтĕмĕшле обществăшăн та лайăх мар пулăмсем пулма пултараççĕ.

Çыру жанрĕн тĕсĕсем нумаях мар.

Уçă çыру вăл – публицистика мелĕпе усă курса конкретлă уйрăм çын патне тухни. Кунта пурне те пырса тивекен интерес палăрмасть. Вăл харпăр хăйĕн питĕ уççăн палăракан характерĕпе, кăмăл-туйăмĕпе курăмлă. Конкретлă çыннăн йышăнăвĕпе, ĕçĕпе çыхăннă лару-тăрăва тишкерсе автор хак парать.

Уçă çырура ытларах чухне пĕлтерĕшлĕ социаллă тата политика, экономика тата нравственноç ыйтăвĕсене тишкереççĕ. Вĕсене татса парасси вара, ытларах чухне – влаç органĕсен представителĕсен аллинче. Çавăнпа та нумай чухне уçă çыру адресачĕ шутĕнче – патшалăх влаç органĕсен ертӳçисем, обществăпа политика ĕçченĕсем. Уçă çыру – актуаллă проблемăна татса памалли чи кĕске çул-йĕр.

Адрессăр çыру – вулакансен конкретлă асăнман ушкăнĕ патне янă çыру. Жанрăн асăннă форми пĕлтерĕшлĕ шутланакан ыйтăва е актуаллă проблемăна сӳтсе явма общественноç умне кăларма май парать. Адрессăр çыру авторĕ ăнланать: сӳтсе явакан лару-тăрăва е проблемăна татса парасси тӳрремĕнех адресатран килмест. Çавăнпа та кунта авторăн кăмăл-туйăмĕ уçă çырури пекех сисĕмлĕ мар.

Редакцие янă çыру – публицистика мелĕпе тухса калаçни. Вăл актуаллă темăна хускатакан конкретлă метериала хак пани те пулма пултарать, çавăн пекех – редакцие тата обществăна проблемăллă лару-тăру çине тимлĕх уйăрма хистекенни те.

Редакцие янă кашни çыру – уйрăм вулаканăн е вулакансен коллективĕн пултарулăхĕн кăтартăвĕ, экономикăри, политикăри е ăс-хакăл сферинчи лайăх е лайăх мар пулăмсене хак пани. Факт е пулăм çинче чарăнса тăнă май, автор хăйĕн ăслăлăх тата ăс-хакăл майĕсемпе усă курса тишкерӳ ирттерет, хăйĕн шухăш-кăмăлне пĕлтерет, кризислă лару-тăруран тухмалли çул-йĕре сĕнет. Çапла вара редакци почти журналистсене тата çӳлти социаллă структурăсене конкретлă материал тата общество пурнăçĕнче тухса тăракан пысăк проблемăллă ыйтусене мала кăларма сăлтав парать.

Асăннă жанрăн тĕп задачи – адресата автор позицийĕ тĕрĕс пулнине, çырура палăртнă проблемăна хăвăртрах татса пама кирлине ĕнентересси. Апла пулсан журналист çынна ĕнентерме пĕлни, хăйĕн адресачĕн психологине ăнланни, тĕрлĕ информаци енĕпе витĕм кӳрессипе теорипе практика пĕлĕвĕпе усă курма пултарни пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Кунсăр пуçне авторăн проблемăна уçса панă чухне логика тĕлĕшпе çыхăннă аргументсемпе усă курма тивет. Апла пулсан ыйту историне тĕплĕ пĕлни, ыйтăва татса парас тесе унччен мĕн тунине тишкерсе хак пани, лайăх еннелле улшăну тумалли майсене курса тăни тата ăнланни кирлĕ.

Ку жанрта халăх чĕлхин тата жаргон сăмахĕсемпе те усă курма пултараççĕ. Мĕншĕн тесен вăл çыру çыраканăн характерне те сăнлать, çырса кăтартакан пулăма е факта мĕнле йышăнассине те йĕркелет.

Çырăвăн хаçат страницинчи калăпăшĕ пирки калас пулсан, кунта нимĕнле чикĕлев те çук. Пĕтĕмпех çĕклекен проблема пĕлтерĕшĕнчен килет. Вĕсем хаçатра пилĕк йĕркеллисем те, çавăн пекех страниципех йышăнаканнисем те пулма пултараççĕ.

# Шкулсенчен хыпарлаççĕ

## Саккунсене пĕлни кирлĕ

Районти шкулсенче декабрĕн 10-мĕшĕччен право пĕлĕвĕн уйăхлăхĕ пырать. Уйăхлăх вăхăтĕнче шкул ачисене саккунсемпе паллаштараççĕ, çавăн пекех вĕсене йĕркене пăсассинчен асăрхаттараççĕ.

Уйăхлăх шайĕнче Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулта ноябрĕн 18-мĕшĕнче çул çитменнисен инспекторĕ Инга Игнатьева пулчĕ. Аслă классенче вĕренекенсемпе тĕл пулнă май, вăл вĕренӳ çулĕ пынă вăхăтра ачасен урамран е ытти обществăлла вырăнтан 22 сехетчен киле таврăнмаллине аса илтерчĕ. Уроксене сăлтавсăрах сиктерме юраманни пирки те, çул-йĕр хăрушсăрлăх правилисене пăхăнмаллине те асăрхаттарса хăварчĕ. РФ Административлă право нормисене пăснин кодексĕпе те паллашма сĕнчĕ.

## Республика проектне хутшăнатпăр

2019 – 2020 вĕренӳ çулĕнче республикăн «Образовательное воскресенье» проектне пурнăçа кĕртесси малалла пырать. Шурчари пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул команди унччен ку проекта хутшăнманччĕ. Кăçал вара, активистсем ыйтнипе, унта хутшăнса пăхас терĕмĕр.

Малтанласа ноябрĕн 10-мĕшĕнче Шупашкарти 45-мĕш номерлĕ вăтам шкулта иртнĕ занятие хутшăнтăмăр.

Кунпа пĕрлех çав кун пирĕн командăра РДШ-ăн тепĕр пĕчĕк çăлтăрĕ çутăлчĕ – Ангелина Фадеева. Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче вăл уйрăмах активлăхпа палăрса тăрать. Социаллă сетьре лайфхаксен «БабушкаРДШ» республика конкурсне хутшăнса 2-мĕш вырăн çĕнсе илме пултарчĕ. Кунпа пĕрлех вăл РДШ футболкине тивĕçрĕ. Уншăн питĕ савăнчĕ. Халĕ унăн хăйĕн ятарлă футболка пур. Çавăн пекех ачасен Шупашкарти «Куча мала!» медиа-центрĕн çамрăк журналисчĕсем тата «Тантăш» хаçат корреспонденчĕсем унран интервью илчĕç.

## Телефонпа тĕрĕс усă курмалла

Телефон туяннă чухне унăн пайăркасем тухса тăраслăх шайне шута илмелле. Вăл пĕчĕкрех пулсан, телефонăн сиенĕ те пĕчĕкрех. Кунне телефонпа 10 минутран ытла калаçма ан тăрăшăр. Телефона кĕсьере мар, уйрăм чехола чиксе портфельте тытăр. Наушникпа юрă 10 – 15 минутран ытла ан итлĕр. Телефонăн дисплейĕ çине 15 минутран ытла ан пăхăр. Çывăрнă чухне телефона минтер айне ан хурăр.

Пире, Чуманкасси шкулĕнчи 8 класра вĕренекенсене, класс ертӳçи шăпах çак сĕнӳсене пачĕ. Класс сехетĕнче вăл кĕсье телефонĕ хăçан тата мĕнле пуçланса кайнипе те паллаштарчĕ, шкулта чухне телефонпа вĕренӳ учрежденийĕ йышăннă йĕркепе килĕшӳллĕн усă курмаллине те асра тытма сĕнчĕ.

**Хыпарсене шкулсенчен килнĕ çырусем тăрăх хатĕрленĕ.**

# Эпĕ те «Артекра» пулса куртăм




Хисеплĕ ачасем! Эпĕ сире хамăн ĕмĕтри лагерьте епле майпа пулса курма май пулни, хамăн туйăмсем пирки каласа кăтартасшăн. Çакă вăл пĕтĕмпех мана пирĕн учитель – Наталия Борзаева куратор «Сделаем вместе» юхăмăн «Здоровое питание – активное долголетие» акци лидерĕсен конкурсне хутшăнма сĕннинчен пуçланчĕ. Çине тăрсан, тăрăшсан, ӳсĕмсем пулаççех тесе ахаль каламаççĕ вĕт-ха. Çапла вара эпĕ çĕнтерӳçĕсен ретне лексе ачасен халăхсем хушшинчи Крымри «Артек» кану центрне кайса курма тивĕçрĕм.

Пĕрремĕш кунран тытăнсах мана кунта юмах тĕнчине лекнĕнех туйăнчĕ. Эпĕ «Янтарный» лагерĕн футбол профиль отрядĕнче кантăм. Пуринпе те туслашрăмăр. Халĕ манăн тус-юлташсем – пĕтĕм Раççейĕпех. Вĕсем мана чăн-чăн туслăх епле çирĕп вăй пулнине ăнланса илме май пачĕç.

«Суук-су» керменте, Севастополь тăрăх, Хура тинĕс хĕррипе курса çӳренисем нихăçан та асран тухаймĕç. Кунта илнĕ туйăмсене сăмахпа каласа пама та май çук.

Смена вĕçленнĕ тĕле эпĕ çакна çирĕппĕнех ăнланса илтĕм: пирĕн коллектив – чи тусли те чи çирĕппи. Пирĕн вожатăйсем пек маттуррисене «Артекра» урăх шыраса та тупма май çук пулĕ. Çак смена маншăн ĕмĕрлĕхех асра юлчĕ. Мана çак юмах тĕнчинче пулса курма май туса панăшăн, мана пулăшса пынăшăн эпĕ хамăн пĕтĕм тăвана, тус-юлташсене, тăван шкул коллективне тав сăмахĕ калатăп.

Хăйсен ĕмĕтне пурнăçа кĕртме шухăшлакан ачасене те сĕнӳ парас шухăш пур. Чи пĕлтерĕшли парнене, хисепе тивĕçесси мар. Унран та пĕлтерĕшлĕрехххи – хăвăн вăйна шанасси, ĕненесси, палăртнă тĕллев патне çитме пĕтĕм вăй-халпа тăрăшасси, ăнтăласси. Çавăн чухне ӳсĕмсем пулаççех.

**Владислав ДМИТРИЕВ,**
**Шурчари пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул вĕренекенĕ.**

# «Пысăк Атăл» кубокĕшĕн

Ильинка ял тăрăхĕнче пурăнакансемшĕн ноябрь уйăхĕ «Пысăк Атăл» кубокĕшĕн иртекен ăмăртупа палăрса тăрать.

Кăçал та çак ăмăртăва хутшăнакансем вырăнти шкула йышлăн пухăнчĕç. Ăмăрту программине, ытти чухнехи пекех, волейбол, шахмат тата сĕтел çинчи теннис вăййисене кĕртнĕ.

Спорт уявне Ильинка шкул директорĕ Надежда Иванова уçрĕ. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Марина Соколова ăмăртăва хутшăнакансене Ильинка ял тăрăхĕнчи спорт традицийĕсене малалла тăсассине пысăк тӳпе хывнăшăн тав турĕ. Спорт ăмăртăвне хутшăнса аслисем ачасемпе çамрăксене лайăх тĕслĕх кăтартнине палăртрĕ. Шкула Муркаш районĕнчи волейбол федерацийĕн ертӳçи Александр Давыдов та килчĕ. Вăл районта волейбол вăййи анлă сарăлнине, çак вăййа сарассинче ветерансем те чылай пулăшнине пĕлтерчĕ.

Командăсем шăпа туртнă хыççăн вăйăсем пуçланчĕç.

Шахматистсен пĕтĕмлетĕвĕпе ытти ăмăртăвăн пĕтĕмлетĕвĕнчен маларах паллашма май пулчĕ. Пĕрремĕш вырăна орининсем тухрĕç, иккĕмĕш вырăна – кил хуçисен команди, виççĕмĕшне – москакассисем.

Шахматистсем пысăк ăсталăхпа палăрчĕç. Майя Терентьева, Людмила Семенова, Оксана Гаврилова, Юрий Семенов, Алексей Прокопьев, Павел Колбасов, Борис Леденцов тата ыттисем вылянине сăнама кăсăклă пулчĕ.

Спортзалта вара мечĕкшĕн хĕрӳ вăйăсем пычĕç. Кунта «Ильинка» команда мала тухма пултарнăшăн эпир питĕ савăнтăмăр. «Оринино» тата «Москакасы» командăсем хыççăнхи вырăнсенче пулчĕç.

Мала тухнă волейбол командисенче чи лайăххисене уйрăммăн палăртса чысларĕç. Вĕсем çаксем пулчĕç: чи лайăх хӳтĕлевçĕ – Артем Гаврилов, чи лайăх тапăнакан – Анатолий Иванов, чи лайăх выляттаракан – Василий Шерстяков.

Сĕтел çинчи теннис вăййине спорт ветеранĕсем хутшăнчĕç. Питĕ вăрвар пулчĕç вĕсем. Владимир Шайков малти вырăна тухрĕ, иккĕмĕш вырăна – Валерий Волков, виççĕмĕшне – Валериан Павлов.

Ăмăртăвăн чи кĕçĕн хутшăнаканĕ тесе Даниил Котельникова палăртрĕç, чи асли тесе – Александр Сорокина.

Пур тĕрлĕ ăмăртăвăн пĕтĕмлетĕвĕпе «Пысăк Атăл» кубока орининсем тивĕçрĕç. Иккĕмĕш тата виççĕмĕш вырăнсенче – ильинкăсемпе москакассисем.

Çакăн пек чаплă ăмăрту пирĕн шкулта иртнĕшĕн эпир питĕ савăнтăмăр.

**Ильинка шкулĕнче вĕренекенсем.**

***Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.***